25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 АПРЕЛЬ 25 ШАМАТКУН 97 (6032) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 23-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

Тĕрĕсрех палăртнă тăрăх, апрелĕн 21-мĕшĕнче нимĕçсенне малтан пĕлтернĕ пек 32 самолет мар, 37 самолет пĕтерсе тăкнă.

Апрелĕн 22-мĕшĕнче нимĕçсен 14 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 22-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе груз-сем турттарса пыракан 18 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 10 лавне, темиçе орудине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассем хунă 2 склада сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.400 çынна ытла пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 12 дзотне çĕмĕрнĕ, 3 танкне, пĕр орудине тата темиçе пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Мохов лейтенант командир пулса ертсе пыракан утлă гвардеецсен взвочĕ Е. ялĕнче тăракан нимĕçсене атакăланă. Мохов юлташ мала ыткăнса тухса çавăнтах нимĕçсен виçĕ салтакне вĕлернĕ. Боецсем хăйсен командирĕ хыççăн атакăна хăюллăн кĕрсе кайнă та гитлеровецсене аркатса тăкнă. Нимĕçсем каялла чакнă. Вĕсем хăйсен çапăçура вилнĕ салтакĕсемпе офицерĕсене 35 çынна тата аманнисене 75 çынна пăрахса хăварнă. Пирĕн кавалеристсем çав çапăçура нумай хĕçпăшал, 60 лаша, минăсем хунă 10 ещĕк тата 80.000 патрон тытса илнĕ.

* * *

Азаренков юлташăн орудин расчечĕ юлашки вăхăтра нимĕçсен 7 танкне, боеприпассем хунă 2 склада персе çĕмĕрнĕ тата противникăн 2 орудине, 28 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кĕçĕн сержант Кнютин, противник артиллерирен тата пулеметсенчен персе тăнине пăхмасăр, пĕр кун хушшинче телефон линине 11 хутчен тӳрлетнĕ. Кнютин юлташ çапла майлаштарсах тăнипе командăй пунктпа Кнютин юлташăн чаçĕн подразделенийĕ хушшинчи çыхăну пĕр чарăнмасăр ĕçлесе тăнă.

* * *

Минск партизанĕсен Я. юлташ ертсе пыракан ушкăнĕ апрелĕн малтанхи çур уйăхĕнче нимĕçсен хĕçпăшалпа войскăсем илсе пыракан 4 эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çак операцисенче, тулли мар даннăйсем тăрăх, гитлеровецсен 200 çын вилнĕ тата 400 çын ытла аманнă, нимĕçсен танкĕсем тата боеприпасĕсем нумай пĕтнĕ.

* * *

Испанецсен «Кăвак дивизийĕнчи» 169-мĕш полкăн 8-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Фернадо Видаль Руис çапла калаçа панă: «Фронта килсенех пирĕн ротăра 203 çынччĕ. Февральте Испанирен тата 27 çын çитрĕ. Кунсăр пуçне рота йышне тĕрлĕ вăхăтра дивизи резервĕнчен çынсем парса татах нумайлатрĕç. Эпир пысăк çухатусем тӳсрĕмĕр. Халĕхи вăхăтра ротăра 40 çынран ытла мар. 12 станковăй пулеметран 7-шĕ вырăссен аллине лекрĕç. Çакăн пек кунсем те пулнă: çĕмĕрсе тăкнипе каялла чакнă чухне ротăра мĕнпурĕ те 20 салтакран ытла юлман. Пире темиçе хутчен те улăштарма пулса сăмах пачĕç, эсир Испание каятăр, терĕç. Пире çапла улталанине халĕ эпир лайăх куратпăр. Нумай салтаксем çапăçусенчен пăрăнса çӳреççĕ. Вĕсем ăçта та пулин тылра çухалса кайма тăрăшаççĕ. Сывалса çитнĕ хыççăн фронта янă салтаксем çулсем тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳреççĕ, хăйсен чаçĕсене илсе пыракан çула вăрăмлатмашкăн вĕсем юри таврă çулсемпе куçаççĕ».

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Эрвин Ланг патне унăн тăванĕсем Эрлангенран çапла çырса пĕлтереççĕ: «Юлташсемпе паллаçнă çынсем пĕрин хыççăн тепĕри çухалса пыраççĕ. Пурне те çара илеççĕ. Халĕ гимназистсене те илеççĕ, 8-мĕш класа куçма вăхăт çитменнисене те илеççĕ».

* * *

Финлянди хулисенче шатра тифĕпе тата вар тифĕпе чирлекенсен шучĕ питех те ӳссе кайнă. Чирлекенсем нумайĕшĕ вилеççĕ, сывалакан сахал. Çакă вăл Финлянди халăхĕ сывлăх тĕлĕшпе халран кайнинчен тата кирлĕ медикаментсем çуккинчен килет. Васа тата Хювинкя хулисенче нумай халăх вилет. Çав хуласен урамĕсенче кашни кунах вилнĕ çынсене пытарма кайнине вуншар хутчен те курма пулать.

* * *

Молотов облаçĕнчи ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар валли Май уявĕ ячĕпе парнесем хатĕрлеççĕ. Коллективсем 336 посылка тата уйрăм çынсем 12 пин посылка пухса хатĕрленĕ ĕнтĕ. Çав посылкăсенче рабочисем, колхозниксем тата служащисем фронта ăшаланă сысна çӳрисене, чăхсене, колбаса, чăкăт, печени, консервăсем, хуткупăссем, баянсем тата ытти япаласем те пит нумай яраççĕ. Молотов районĕнчи райпромкомбинатра ĕçлекен рабочисем кĕпе-йĕм çумалли 3 машина туса хатĕрленĕ, вĕсене фронта яраççĕ.

Апрелĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

* * *

Калинин фронтĕнчи участоксенчен пĕринче çапăçакан пирĕн чаçсем юлашки икĕ кун хушшинче противникăн темиçе контратакине сирсе янă. Вилнисене кăна шутласан та, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 1.200 çын пĕтнĕ. Тăшманăн темиçе танкне пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнă пулин те, халăх пурăнакан çирĕплетнĕ пункта йышăннă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн виллисем нумай выртса юлнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Пирĕн кавалерин Гвардейски чаçĕн подразделенийĕ нимĕçсене Ш. ялĕнчен хăваласа кăларнă та тăшманăн боеприпассем тиенĕ 11 автомашинине тытса илнĕ. Часах нимĕçсем контратака туса пирĕн боецсене хĕснĕ. Халĕ кăна тытса илнĕ трофейсем тăшман аллине лекме пултарнă. Старши сержант Ненашин юлташ, Николаев тата Денисенко красноармеецсемпе пĕрле, противник персе тăнă вăхăтрах автомашинăсем патне шуса пынă та вĕсен айне взрыв тăвакан япаласем темиçе килограмм хунă. Нимĕçсем машинăсем патнелле пыма тытăнсан, Ненашин юлташ шнура вут тĕртсе янă. Взрыв пулнă сасă ил-

Юлашки 2-мĕш страницăра

Заем сарас ĕç мĕнле пырать

Пирĕн республикăри ĕçсыннисем, Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕçхалăхĕ пекех, государствăн заемĕсене çулран çул ытларах çырăнса илеççĕ. Пĕлтĕр Виççĕмĕш Пятилеткăн (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) заемне республикăра 24.818.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă пулсан, кăçал Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне вунă кун хушшинче 63.276.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Вăл шутран çĕнĕ заема рабочисемпе служащисем хушшинче 24.555.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 28.402.000 тенкĕлĕх, колхозсемпе артельсенче 10.319.000 тенкĕлĕх сарнă. Шупашкарти ĕçсыннисем заема 6.311.000 тенкĕлĕх çырăннă.

Кăçал подписка укçине пухасси те пĕлтĕрхинчен лайăхрах пырать. Апрелĕн 24-мĕшĕ тĕлне республикăра 31.138.000 тенкĕ пухнă. Сĕнтĕр, Хĕрлĕ Чутай, Советски районри колхозниксемпе единоличниксем хушшинче заем укçине пĕтĕмпех пухса çитерчĕç. Анчах юлашки кунсенче хăшпĕр районсенче подписка укçине пухас ĕçе сӳрĕклетни палăрать. Улатăр, Канаш, Красноармейски, Ишлей, Тăвай, Елчĕк районĕсенчен пĕлтернĕ сводкăсем пĕр улшăнмасăр тăраççĕ. Подписка укçине пухассине çак районсен вăйлатас пулать.

Пурте çырăнчĕç

ЕЛЧĔК. «Красное знамя» колхозра çĕнĕ заема çырăнмасăр пĕр çын та юлмарĕ. Вĕсем ăна пурте пĕр шухăшлă пулса 13.400 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Ялти активистсем заема пысăк суммăлăх çырăнса хăйсен патриотизмне кăтартрĕç. Колхоз председателĕ П. Варламов, комсомолец-призывник В. Кондратьев юлташсем 1000-шер тенкĕлĕх, И. Сергеев, М. Лепешкина, Г. Спиридонов, И. Дмитриев, И. Кузьмин колхозниксем 500—600-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Н. СУХАРЕВСКИЙ.

Агитаци ĕçне хакламанни пулмалла мар

СĔНТĔР. (**Хамăр корр**). Районри хăшпĕр ялсовечĕсенче партипе пропагандăпа агитаци ĕçĕ çине сӳрĕккĕн пăхни, çакăн пирки агитаци ĕçне начар туса пыни курăнать. Çатракасси ялсоветĕнчи агитколлектив юлашки вăхăтра хăйĕн ĕçĕсене япăхтарса янă. Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне колхозниксем хушшинче вырнаçтарас тĕлĕшпе агитколлектив çителĕксĕр ĕçленĕ. Çакăн пирки ĕнтĕ Çатракасси ялсоветĕнче çырăнман колхозниксемпе единоличниксем пур-ха. Вĕсем хушшинче ăнлантару ĕçне тумаççĕ.

Çатракасси пек ялсовечĕсем районра татах та тупăнма пултараççĕ. Районра пропагандăпа агитаци ĕçне вăйлатмалла.

Красноармеецсен патриотизмĕ

Н-ски училищĕри курсантсем СССР Совнаркомĕ Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне кăларнине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. «Çĕнĕ заем Гитлерăн çарне аркатса тăкас вăхăта çывăхартма пулăшать», теççĕ вĕсем.

Курсантсем СССР Совнаркомĕн постановленине радиопа пĕлтернĕ хыççăнах заема çырăнма тытăнчĕç. Я. Захаров, Б. Леонтьев, Г. Ефремов, М. Порфирьев курсантсем заема 200-шер тенкĕлĕх çырăнса, укçине çавăнтах тӳлерĕç. Училищĕри командирсемпе политработниксем заема пурте уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăнчĕç.

М. ПОРФИРЬЕВ.

Мускав çар округĕ.

Оборона гектарĕсем акма палăртнă

СĔНТĔР. (**Телефонпа**). Апчарти «Сеялка» колхоз членĕсем, Краснодар крайĕнчи Н. К. Крупская ячĕпе тăракан колхоз пуçарăвне сӳтсе-явса, çĕршыв оборонин фондне хума планран ирттерсе 3 гектар çурă çĕр çине тырă акма йышăнчĕç. Вăл шутран 2 гектар çине урпа, пĕр гектар сĕлĕ тата çур гектар çине çĕрулми лартма палăртрĕç. Çавăн пекех нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшма Оринкинăри «Красное Сормово» колхоз та планран ирттерсе пĕр гектар тырă акса хăварма йышăнчĕ.

С. НАЛИМОВ.

„Пионер Чувашии“ танк тума

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри шкулсенче вĕрентекенсемпе вĕренекенсем, Етĕрне хулинчи пионерсен чĕнĕвĕ çине ответлесе, «Пионер Чувашии» танк тума пурĕ 7.500 тенкĕ укçа пухса пачĕç. Вăл шутран Упири вăтам шкул коллективĕ 1575 тенкĕ, Çавалçырминчи тулли мар вăтам шкул коллективĕ 654 тенкĕ пухнă.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Партипе правительство ĕçкунĕсен минимумне ӳстерме йышăннине республикăри колхозниксем ырлаççĕ

Партипе правительствăн постановленине кашни колхознике ăнлантарса памалла

СОВЕТСКОЕ, апрелĕн 24-мĕш. (**Телефонпа**). Районри колхозсем партипе правительство обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ӳстересси çинчен тата ялхуçалăх ĕçне хуласенчи, яллă вырăнсенчи халăха мобилизацилесси çинчен йышăннă постановленисене сӳтсе-яваççĕ. Пур колхозсенче те колхозниксемпе колхозницăсем партипе правительствăн постановленине хĕрӳллĕн ырласа йышăнаççĕ.

Малта пыракан «Сеятель» колхозăн председателĕ коммунист Андреев юлташ çапла калаçа парать.

— Пирĕн колхозри колхозниксемпе колхозницăсем партипе правительствăн çак постановленийĕсене хĕрӳллĕн ырласа йышăнчĕç. Вĕсем колхозлă строя малалла вăйлăн аталанса пыма, тӳрĕ кăмăллă колхозниксене татах та лайăхрах ĕçлеме май туса параççĕ. Пирĕн колхозра иртнĕ çулсенче те ĕç дисциплини тивĕçлĕ вырăнта тăнă. Нумайĕш колхозниксем обязательнăй йĕркепе тумалли ĕçкунĕсен минимумне чылай хут ирттерсе пурнăçланă. Çак вăхăтрах хăшпĕр колхозницăсем правительство кăтартса панă чухлĕ ĕçкунĕсем туман. Тĕслĕхрен, 1941 çулта М. Платонова колхозница ĕçлеме пултарнă пулсан та, 80 ĕçкунĕ туман. Халĕ, партипе правительствăн постановленийĕсене ăнлантарса панă хыççăн, Платонова юлташ та колхоз производствинче тăрăшса ĕçлеме пуçларĕ.

«Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ӳстересси çинчен» йышăннă постановлени колхоз руководителĕсем умне пысăк задача кăларса тăратать. Колхоз руководителĕсен колхозниксемшĕн тăрăшмалла, вĕсем йĕркеллĕн ĕçлеме пултарччăр тесе колхозсенче ача яслисемпе площадкăсем организацилемелле, пĕрлешӳллĕ столовăйсем тумалла.

Партипе правительствăн постановленийĕпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем çак кунсенче ĕç тухăçлăхне чылай ӳстерчĕç, дисциплина çирĕпленчĕ. «Сеятель» колхоз членĕ Семен Яковлев (вăл 60 çулта ĕнтĕ) 1941 çулта 326 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Кăçал та вăл ĕçе кашни кунах тухать, тăрăшса ĕçлет.

Юманайĕнчи «Большевик» колхоз членĕсем партипе правительствăн постановленийĕсене апрелĕн 21-мĕшĕнче сӳтсе-явнă, тепĕр кун ирхине ĕçе пĕр çын пек тухрĕç. «Рекорд» колхозра ĕç тухăçлăхĕ пысăккăн ӳсленчĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхозра Ф. Семенов колхозник иртнĕ çул обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне пурнăçламан. Халĕ Ф. Семенов колхозник кашни ирех колхоз правленине пырса хăйне ĕç пама ыйтать.

Партипе правительствăн постановленийĕ кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăçлама колхозсене пулăшакан пысăк вăй пулса тăрать. Çак постановление кашни колхознике тĕплĕн ăнлантарса парса ĕçе активлăн хутшăнтарасси ялти коммунистсен, комсомолецсен, агитаторсен ответлă задачи пулса тăрать.

П. НИКИТИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Постановлени хастарлăн ĕçлеме хушать

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, апрелĕн 23-мĕш. (**Телефонпа**). Пайсубино ялсоветне кĕрекен «Красноармеец» колхоз членĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ӳстересси çинчен йышăннă постановление пухура сӳтсе-яврĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем постановление пĕр кăмăллăн ырласа йышăнчĕç.

— Партипе правительствăн çĕнĕ постановленийĕ колхозра ĕç дисциплинине çирĕплетекен хăватлă вăй пулса тăрать. Çĕршывра отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра пирĕнтен кашниех колхоз производствинче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме тивĕç, çĕршывпа фронта çителĕклĕ таран тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç туса парассишĕн хастарлăн ĕçлеме тивĕç. Кахалланса çӳрени — преступлени туни пулать. Партипе правительство постановленийĕ колхозниксене татах та хавасланрах ĕçлеме хушать,—терĕ Фадеева колхозница пухура.

Партипе правительствăн постановленине сӳтсе-явас тĕлĕшпе «Победа», «Прогресс», «Новая сила» колхозсенче те пухусем пулса иртрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем партипе правительствăн постановленине ăшă кăмăлпа ырлаççĕ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

ТУЛЛИ КĂМĂЛПА

ЕТĔРНЕ, апрелĕн 23-мĕш. (**Телефонпа**). Районри пур колхозсенче те ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ӳстересси çинчен» йышăннă постановление сӳтсе-яваççĕ.

Ку постановление колхозниксем тулли кăмăлпа ырласа йышăнаççĕ. Ильич ячĕпе тăракан колхозра çак постановление сӳтсе-явнă чухне 53 çулти Романов юлташ сăмах каларĕ.

— Эпĕ пĕлтĕр, 53 çулта пулсан та, 200 ĕçкунĕ ытла турăм. Кăçалхи çул тата хастартăрах ĕçлеме шутлатăп, терĕ.

Ильич ячĕпе тăракан колхоз членĕсем ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленине тулли кăмăлпа ырлаççĕ. Партипе правительствăн çак постановленийĕ пире татах та ытларах тăрăшса ĕçлеме хавхалантарать, теççĕ колхозниксем.

А. КРАСНОВ.

Çуракине лайăх ирттерме чĕнетпĕр

Эпир, фронтра аманса тухнă хыççăн госпитальре сывалса пурăнакан чăваш боецĕсем, хамăрăн чăваш колхозникĕсене çакна каласшăн: Совет çĕршывне нумай инкек, пусмăрлăх тата асапсем илсе килнĕ тискер фашистсене хирĕç пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар вирлĕн çапăçать, çав çынçиен бандитсене хамăрăн тăван çĕршывран часрах хăваласа кăларассишĕн вăл хăйне шеллемесĕр кĕрешет. Тăван Хĕрлĕ Çар вăйлăн çапăçтăр тесен, пирĕн боецсем, командирсем, политработниксем пурте яланах тутă, çирĕп пулмалла. Ун пек пултăр тесен, заводсенчи рабочисем лайăхрах та нумайрах хĕçпăшал парса тăнă пекех, пирĕн колхозниксен те Хĕрлĕ Çар валли ытларах та ытларах продуктсем парса тăмалла. Апла пулсан, пирĕн колхозниксен лайăхрах тата ытларах тырпул туса илмелле. Çакăн çинчен астутарса, эпир хамăрăн тăван колхозниксене çак çуракинче пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме чĕнетпĕр. Чăн та, кăçалхи çуракинче йывăрлăхсем пулĕç. Çапах та, кашни колхозник паянхи вăрçă ыйтăвĕсене тĕплĕн ăнланса илсе, пĕтĕм вăйне хурса ĕçлесен, çураки планне ăнăçлăнах тултарма пулать. Тăрăшса ĕçлĕр, тăван колхозниксем, кăçалхи çуракинче. Эсир пĕтĕм вăя хурса ĕçлени тăшмана часрах çĕнтерме пулăшĕ.

Эпир халĕ госпитальре сывалатпăр. Кунта пире лайăх пăхаççĕ. Сывалса çитсенех каллех фронта кайма хатĕр тăратпăр. Ирсĕр фашистсене эпир çĕнтеретпĕрех.

Чăваш красноармеецĕсем: МИХАЙЛОВ СЕРГЕЙ, КОНСТАНТИНОВ ВАСИЛИЙ (Вăрмар районĕнчен); КАЗАНЦЕВ СЕРГЕЙ (Куславкка районĕнчен); ИВАНОВ АНДРЕЙ (Тăвай районĕнчен) тата ФЕДОРОВ ИВАН (Вăрнар районĕнчен).

Мускав облаçĕ.

Çурхи ĕçсем пуçланчĕç

ИШЛЕЙ. Кăшавăш ялсоветĕнчи «Осоавиахим», Алино ялсоветĕнчи «20 лет Чувашии» колхозсем юртан пушаннă участоксем çине клевер акма тытăннă. «Большевик» колхоз клевер вăрлăхне 4 центнер хатĕрленĕ. Ку вăл планпа пăхнă участоксем çине акма çителĕклĕ пулать.

З. МИТРОФАНОВА.

ХĂШПĔР КОЛХОЗСЕМ МĔНШĔН КАЯ ЮЛАÇÇĔ

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр., телефонпа**). Районри хăшпĕр колхозсем çуракине хатĕрленес ĕçе халĕ те сӳрĕккĕн туса пыраççĕ. Районра вăрлăх хатĕрлес ĕç уйрăмах япăх пырать. «Красная Звезда» колхозра (председателĕ Прохоров) сĕлĕ тата тулă вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Уйăрса хунă вăрлăхсен пахалăхĕ те начар. Сăмахран, пăрçа вăрлăхĕн шăтас пахалăхĕ 64 процент кăна, нӳрлĕхĕ 24 процента çитет. Йĕтĕн вăрлăхĕн шăтса тухас пахалăхĕ 29 процент çеç. Тукасри «Заря» колхозра (председателĕ Скачков) сĕлĕ вăрлăхĕн шăтас пахалăхĕ—52 процент, нӳрлĕхĕ—21 процент, кантăр вăрлăхĕ 56 процент кăна шăтать. Çавăн пекех «Искра» колхозра та вăрлăхсен пахалăхĕ япăх.

«14 лет Октября» колхозăн вăрлăхĕсем лайăх шăтма пултараççĕ. Анчах вăрлăхсем таса мар. Вĕсене тепĕр хут сортлас пулать. Районра ытти чылай колхозсенче те вăрлăх хатĕрлес ĕç начар пулса пынине çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем пĕлеççĕ пулин те, колхозсене тухса ĕçе организацилесе ярассишĕн тăрăшмаççĕ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Ăмăртăва тивĕçлипе ертсе пымаççĕ

ВĂРНАР. Майăн 1-мĕшĕ çывхарса килет. Леспромхозра ĕçлекенсем ăна тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленсе кулленхи ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Чугунçул валли вăрман хатĕрлекенсенчен чылайĕшĕсем хăйсен нормисене ытлашшипех тултараççĕ. Малти Антăвăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем А. Маркеловпа Е. Жураев юлташсем виçĕ çын чухлĕ ĕçлеççĕ. Сăръелĕнчи «Свет» колхоз членĕсем Ф. Терентьева, П. Лукина, И. Кузнецов т. ыт. юлташсем те ĕç тухăçлăхне икĕ хут ӳстерчĕç.

Май умĕнхи ăмăрту вăхăтĕнче чылай колхозниксем виçĕ уйăхри заданисене тултарчĕç. Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕ П. Яковлев юлташ пĕр лашапа ĕçлесе 120 кубометр вырăнне 135 кубометр вутă турттарса кăларчĕ. «Ака-туй» колхоз членĕ К. Назаров, «Красный пахарь» колхоз членĕ И. Лушнов юлташсем те сезонри заданиe срокченех тултарчĕç.

Анчах, калас пулать. Вăрнар леспромхозĕн руководителĕсем вутă хатĕрлевĕнче ĕçлекенсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва кирлĕ пек ертсе пымаççĕ. Ку вăл çак тĕслĕхсенчен те лайăх курăнать. Десятниксен вăрманти рабочисен ĕçĕсене кулленех шута илсе пымалла. Анчах вĕсем, ĕçе темиçе кунран çеç шута илсе, уйрăм стахановецсен ĕçлес кăмăлне чакараççĕ. Çитменни çине десятниксемпе бракерсем ĕçе рабочисенчен икĕ-виçĕ сехет кая юлса тухаççĕ, хăшпĕрисен ĕçне тата пачах шута илмеççĕ. Сăмахран, П. Вуколов юлташ иккĕмĕш уйăх ĕнтĕ норма тăрăх кашни кун 12 пачкă хăйрас вырăнне 25—26 пачкă хăйрать. Çапах та унăн ĕçне никам та шута илмен, ăна çавăншăн пĕр пус та тӳлемен. Кунта çавăн пек çитменлĕхсем татах та пур. Анчах Вăрнар леспромхоз дирекцийĕ вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

М. ВОЛКОВ.

Уяв тĕлне пĕррремĕш квартал планне тултарассишĕн кĕрешеççĕ

ИШЛЕЙ, апрелĕн 24-мĕш. (**Телефонпа**). Чурачăк ялсоветĕнчи ĕçсыннисем пĕрремĕш кварталта укçа-тенкĕ пухас плана Май уявĕ тĕлне 100 процентпех тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Ялсовечĕпе пĕрремĕш кварталта 18.000 тенкĕ укçа пухмалла пулнă пулсан, паянхи куна 14.000 тенкĕ пухнă. Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе налог агенчĕ П. Шогулин, ялсовет председателĕ Е. Яковлев юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

З. МИТРОФАНОВА, Е. ТЮРИН.

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри комсомол организацийĕ тимĕр-тăмăр пухас ĕçе чарăнмасăр туса пырать. Йывăç каскалакан, вагонсем юсакан тата тимĕрçĕсен цехĕнчи çамрăксем çак кунсенче 18 тонна тимĕр пухрĕç. Ытти цехсенче 20 тонна ытла пухнă.

Тимĕр-тăмăр пухас ĕçе вăтам шкулта вĕренекенсем те активлăн хутшăнаççĕ.

М. АНДРЕЕВ.

* * *

КАНАШ. Сиккассипе Яманкасси ялсоветĕнчи комсомолецсемпе пионерсем промышленность валли 2 тонна тимĕр-тăмăр пухса пачĕç.

И. МАКСИМОВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри комсомолецсемпе çамрăксем юлашки вăхăтра 16 тонна тимĕр-тăмăр пухнă. Вăл шутран Мартынкасси ялсоветĕнче 1,5 тонна, Исаково, Албахтино, Тĕрер ялсовечĕсенче пĕрер тонна ытларах пухса панă.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Хучашри вăтам шкулта вĕренекенсем çывăхри «Труд», «Хĕрлĕ Çыр», «Красное Хочашево» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсенче пурĕ 500 килограмм тимĕр-тăмăр пухса пачĕç.

Якимкинăри «Коммунар» колхозра 2 тонна пухнă.

С. ФЕДОРОВ. М. ШВЕЦОВ.

Ирĕке кăларнă районсенчи шкулсене пулăшаççĕ

СĔНТĔР. (**Хамăр корр.**). Хĕрлĕ Çар нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă вырăнсенчи шкулсене пулăшас тĕлĕшпе Сĕнтĕр районĕнче чылай çитĕнӳсем тунă. Паянхи кун тĕлне районĕпе 3024 тенкĕлĕх 1415 кĕнеке пухса панă. Пухнă кĕнекесем хушшинче учебниксем кăна мар, политикăллă-массăллă литература та нумай. Ку шутра Маркс, Ленин, Сталин сочиненийĕсен чылай томĕсем, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» 16 экземпляр тата ытти те.

Кĕнекесем пухас ĕçре Кашмашпа Ювановăри вăтам шкулсем йышлă кĕнеке парса лайăх пример кăтартрĕç.

Г. АКИМОВ.

И. В. Сталин юлташ Америка посолне В. Стэндли господина йышăнни

Апрелĕн 23-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Посолне В. Стэндли господина йышăннă. Йышăнура Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ пулнă.

Калаçу пĕр сехет ытла пынă.

Хĕрлĕ Çарăн начальствующи тата рядовой составне орденсемпе тата медальсемпе наградăлани

Хĕрлĕ Çар валли 1941—1942 çулта хĕллехи тумтирсем тăратас тĕлĕшпе Командовани панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх наградăланă:

ЛЕНИН орденĕпе — 1-мĕш рангри интенданта **П. С. Малахова**, 1-мĕш рангри интенданта **С. Н. Папазова**, дивизионнăй комиссара **А. М. Пронина**, 3-мĕш рангри интенданта **П. В. Чанова** тата бригинженера **С. И. Ширеца**;

ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе — 14 çынна;

ХĔРЛĔ ÇАЛТАР орденĕпе—65 çынна;

ĔÇЛĔХ ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе — 3 çынна;

«ЗНАК ПОЧЕТА» орденĕпе—38 çынна;

«ЗА БОЕВЫЕ ЗАСЛУГИ» медальпе— 10 çынна;

«ЗА ТРУДОВУЮ ДОБЛЕСТЬ» медальпе — 10 çынна;

«ЗА ТРУДОВОЕ ОТЛИЧИЕ» медальпе — 18 çынна наградăланă. (ТАСС).

* * *

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх Хĕрлĕ Çарăн Автотранспорт, Çулйĕр эксплоатаци, Çулсемпе кĕперсем тăвакан чаçĕсен рядовой тата начальствующи составĕнче тăракан чылай çынсене наградăланă:

ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе — 6 çынна;

ХĔРЛĔ ÇАЛТАР орденĕпе—35 çынна;

«ЗНАК ПОЧЕТА» орденĕпе—33 çынна;

«ЗА ОТВАГУ» медальпе — 27 çынна,

«ЗА БОЕВЫЕ ЗАСЛУГИ» медальпе— 55 çынна;

«ЗА ТРУДОВОЕ ОТЛИЧИЕ» медальпе — 5 çынна наградăланă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

тĕнне. Машинăсемпе пĕрле гитлеровецсем 60 çынна яхăн сывлăшалла сирпĕннĕ. Нимĕçсем хăраса ÿксе пăтрашса кайнине усă курса, пирĕн боецсем атака тунă та çав яла каллех хăйсем йышăннă.

* * *

Лейтенант Калашников ертсе пыракан 17 красноармеец тăшмана тылĕнче засада тунă. Часах вĕсем сывхарса пыракан нимĕçсен обозне курнă. Вăл обозра 30 лав пулнă. Вĕсене салтаксемпе офицерсем 150 çын хÿтĕлесе пынă. Пăшалсемпе пулеметсенчен персе тата гранатăсем пăрахса, пирĕн боецсем обоза тата 50 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Финсен 12-мĕш пехотнăй полкĕнчи 2-мĕш батальонăн 6-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ капрал Эдвин Валентин Раялампи çапла каласа панă: «Вăрçă пуçланнăранпа вара 6-мĕш ротăна 9 хут ĕнтĕ çынсем хушса пачĕç. Сентябрьти çапăçусем хыççăн ротăра 8 çын çеç тăрса юлчĕ. Полкри ытти подразделенисем те çавăн пекех пысăк çухатусем турĕç. Нумаях та пулмасть подполковник Коскимаа командир пулса тăракан пирĕн батальона вырăссен тылне кĕрсе кайма задани пачĕç. Эпир кÿлĕ тĕрригпе вăрçă ушкăна уйăрăлса пытăмăр. Кĕтмен çĕртен вырăссем пулеметсенчен пеме пуçларĕç. Пирĕн салтаксене нумайĕшне вĕлерчĕç, аманнисем татах та нумайрах пулчĕç. Подполковник тарчĕ, пирĕн ротăн командирĕ те тухса шурĕ те хăйĕн салтакĕсене пуçлăхсăрах тăратса хăварчĕ. Финн салтакĕсем вăрçă часрах пĕтессе кĕтеççĕ. Вĕсем нимĕçсем çине питех те тарăхаççĕ, Финляндие вăрçа туртса кĕнĕ Гитлера ылханаççĕ».

* * *

Нимĕçсен тыткăна лекнĕ ефрейторĕ Альковиц çумĕнче вăл хăйĕн арăмĕ Марта патне ярса ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Вăл акă мĕнле çырнă: «Хаяр çулăмтарасса эпир ахалех кĕтеттĕр... Лару-тăру питех те йывăр. Пайтах пуçласа пире каллех çапăçăва кĕртсе ячĕç. Ĕç питех те шанчăксăрăн курă-нать... Хăçан та пулсан пирĕншĕн лайăх вăхăтсем килессине эпĕ шанмастăп».

* * *

Смоленск облаçĕнчи Чернышино ялĕнчи колхозниксен ушкăнĕ Н-ски чаçĕн командирсемпе тата красноармеецсемпе пĕрле акт çырнă. Çав актра нимĕçсен фашистла бандичĕсен тискер ĕçĕсене кăтартса панă. Актра çапла каланă: Чернышино илĕнчен тухса кайнă чухне гитлеровецсем 265 çурта çунтарса тата сирпĕнтерсе янă. Çунса вырттакан çуртсен айĕнче нимĕçсем асаплантарса вĕлернĕ красноармеецсемпе мирлĕ çынсен виллисене тупнă. Ял вĕçĕнчи сарайра асаплантарса вĕлернĕ совет гражданĕсен 25 виллине тупнă. Вĕсен пичĕсене çурса пĕтернĕ, ÿчĕсене штыксемпе чиксе пĕтернĕ тата çунтарса янă. Нимĕç бандичĕсем вĕлернĕ çынсем хушшинче çаксем пур: Елена Тюрина — 80 çулта, Пелагея Матвеева — 59 çулта. Фашистла ирсĕрсем çамрăк хĕрарăма (унăн хушаматне палăртайман) тата унăн икĕ кăкăр ачине вĕлернĕ, вĕсенчен пĕрне персе пăрахнă тата тепĕрне штыкпа чиксе вĕлернĕ.

* * *

Францин тыткăна лекнĕ çыннисем, Штутгарт (Германия) патĕнчи лагерьте пурăнакансксерсем, юлашки уйăхсем хушшинче хăйсене киле яма ыйтса Германи влаçĕсене темиçе хут та çырусем панă. Вĕсем ответ илеймен. Апрелĕн пуçламĕшĕнче лагере инспекци пынă. Тыткăнри çынсен ушкăнĕ, ĕçлеме пăрахассипе хăратса, фашистла чиновникĕсене жалоба панă. Урса кайнă гитлеровецсем тыткăнри çынсен çак ушкăнне питĕ хытă хĕнесе пĕтернĕ. Çакăн çинчен пĕлсен, тыткăнра пурăнакан темиçе çĕр французсем комендатурăпа лагерĕн караул çуртĕ çине тапăннă, нимĕçсене вĕлерсе пĕтерсе çурт-йĕрсене вут тивертсе янă. Гестаповецсен тыткăнри çынсене лăплантарма пынă карательнăй отрячĕ лагерьте никама та тупайман. Тыткăнри çынсем пурте тарса пĕтнĕ.

Фельдфебель Цигерăн „çуркуннехи“ дневникĕ

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Халăх пурăнман пĕр пункт çывăхĕнчи çапăçура 111-мĕш пехотнăй полкри 5-мĕш ротăн командирĕ фельдфебель Цигер вилнĕ. Çавăн çумĕнче дневник тупнă. Дневникăн «çуркуннехи» страницисем питех те интереслă.

«Пирĕн умра сасартăк сăнчăр сасси илтĕнсе кайть. Танксем! Эпир çав танксене хамăрăн тесе шутларăмăр. Анчах çук, вĕсем пирĕн пулмарĕç. Снарядсем пÿртсем хушшинче çурăлаççĕ — танксене хирĕç пемелли пирĕн тупă çÿлелле сирпĕнет.

Вырăс танкĕсен вĕçĕ-хĕрри те çук, ĕçта пăх унта снарядсем çурăлаççĕ. Эпир пĕр вырăнтан тарса тепĕр вырăна пытанатпăр, юлашкинчен акă эпĕ пĕр кĕпер айне кĕрсе выртатăп».

Кĕпер айĕнчен фельдфебель таврара мĕн пулса иртнине сăнаса выртать.

«Танксем çаплах урам тăрăх шăваççĕ, вĕсем пирĕн çула пÿлеççĕ. Сылтăмран вырăссен пехоти килни курăнать. Епле чее вĕсем! Хăшпĕр касаксем пирĕн салтаксене тискер кайăксене йĕрлеснĕ пек йĕрлеççĕ. Сылтăм енче ман ротăри салтаксем тараççĕ. А эпĕ? Еплех манăн кĕпер айĕнчен тухса тарас?»

Цигер ăнсăртран кăна тарса çăлăннă. Анчах вăл çывăхри тылра хăйне савăнтармалли япаласемех кураймасть.

«Эпир пĕр яла пырса çитрĕмĕр. Рота та, батальон та ĕнтĕ пĕр çĕре пухăнчĕç. Тăватă ротăран пĕр рота турăмăр. Командовани çиллленет. Каялла чакнă чухне, ротăсем пысăк çухатусем тунă чухне 2 офицера — рота командирĕсене — салтаксем умĕнчех пере-пере пăрахрĕç».

«Йывăр кунсем çитрĕç», — çапла вĕçленет Цигерăн «çуркуннехи» дневникĕ Тепĕр çапăçура дневник авторне вĕлернĕ.

Полковой комиссар
Г. ТОЛОКОЛЬНИКОВ.

НИМĔÇСЕН 6 САМОЛЕТНЕ ПĔТЕРНĔ

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, апрелĕн 22-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Н-ски авиаподразделенири штурмовиксем противникăн аэродромĕ çине паттăррăн тапăннă. Çак операцие пурнăçлама летчиксем лайăх хатĕрленнĕ. Вĕсем аэродром тĕлне тăшман кĕтмен çĕртен тата çавтери хăюллăн пырса тухнă, нимĕçсен зенитчикĕсем пулеметсенчен пеме пуçлама та ĕлкĕреймен.

Аэродром çинче тăшманăн вĕçсе çĕкленме хатĕр тăракан 7 самолечĕ пулнă. Подразделени командирĕ Смышляев хăюллăн пикировка туса тăшман самолечĕсен вĕçсе хăпармалли площадки çине тупăран тата пулеметсенчен вăйлăн пенĕ. Смышляев хыççăн летчик орденоносец Бурма хăйĕн штурмовикне илсе пынă. Фашистсен самолечĕсене пĕрин хыççăн теприне çулăм хыпа-хыпа илнĕ.

Çакăн пек кĕтмен çĕртен тапăннипе тăшманăн ултă самолетне пĕтерсе тăкнă тата ангара çунтарса янă. Пирĕн летчиксен çухату пулман. А. ГРОМОВ.

„ТЫТКĂНА ЛЕКЕССИНЕ ÇУРКУННЕНЕ КĔТНИНЧЕН ТЕ ЫТЛАРАХ КĔТЕТПĔР“

КĂНТАР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Резниченко лейтенантăн подразделенийĕнчи боецсем вăйлăн пырса çапса нимĕçсене вĕсем йышăннă позицирен хăвсе кăларнă. Совет воинĕсен аллине артиллерин икĕ батарейи, танксене хирĕç пемелли икĕ тупă тата ытти трофейăсем нумай лекнĕ. Тăшман чĕрĕ вăй енчен те пысăк çухату тÿснĕ. Тыткăна илнисем пур.

Гитлерла командовани васкавлăн çапăçăва кĕртекен нимĕç резервисчĕсен шухăш-кăмăлĕ çинчен хăй ирĕкĕпе тыткăна парăннă обер-ефрейтор çапла каласа пачĕ:

— Эпир хамăр тыткăна лекессине, — терĕ вăл, — çуркуннене кĕтнинчен те ытларах кĕтетпĕр. Мĕн пире çуркунне? Вилнĕ салтакшăн пурпĕр — вăл хăть юр ăшĕнче, хăть çуркуннехи шĕлкĕш ăшĕнче выртнăр. Тыткăна парăнасси — пирĕншĕн чи лайăх çуркунне.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Кăнтăр фрончĕ). Ÿкерчĕк çинче: танксем Н. юханшывĕ тăрăх тăшман флангĕ патнелле каяççĕ.
М. РЕДКИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники)

ГЕРМАНИН ФРАНЦИРИ ВОЙСКИСЕМ ПĂСĂЛСА ПЫНИ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентстви çапла пĕлтерет: лайăх пĕлнĕ тăрăх, иртнĕ çул, ноябрь уйăхĕнче, гестаповецсем Францире, Безансонра тата Париж районĕнче 217 нимĕç салтакне «вырăс фронтне каясшăн мар пулнăшăн» персе пăрахнă. Уйччен çавăншăнах айăпласа Нантенра тата Бордора та нимĕç салтакĕсен темиçе группине персе вĕлернĕ.

Халăхи вăхăтра нимĕç салтакĕсем «çухалнисем», вĕсене дисциплинăна пăхăнманшăн пере-пере пăрахнисем Франци хулисене вырнаçнă нимĕç гарнизонсенче куллен кун пулса пыраççĕ. Çав гарнизонсенчи офицерсен составĕ те пăсăлсах пырать.

Францин оккупациленĕн зонинче нимĕç салтакĕсем хăйсен чаçĕсенчен тарасси ÿссех пыни палăрать. Таркăн салтаксем кăйсене шыраккен французсем патĕнче пытанса пурăнаççĕ. Виши влаçĕсем нимĕçсен дезертирĕсене тупсан вĕсене çавăнтах гестаповецсен аллине параççĕ.

БЕЛЬГИРИ ОККУПАЦИЛЛĔ ВОЙСКĂСЕМ ХУШШИНЧЕ ПĂЛХАНУСЕМ ПУЛСА ИРТНĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС). Ирĕклĕ Бельгии агентстви çапла пĕлтерет: Льежра Германин оккупациллĕ войскисем хушшинче пăлханусем пулса иртнĕ. Льеж районĕн çÿреме юраман зонинче пăшал сассисем илтĕннĕ.

ГЕРМАНИ ХАЛĂХĔН ТАРĂХАВĔ ВĂЙЛАНСАХ ПЫРАТЬ

СТАМБУЛ, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС). Час-часах гитлерла хаçатсем «кăмăлсăр çÿрекен çынсене» хăратса çырнă статьясем пичетлесе кăларма пуçларĕç. Гитлеровецсен хаçачĕсем Германи халăхне пăйкăшма пăрахма хушаççĕ.

«Берлинер Локальанцейгер» хаçат нимĕçсене тÿсме хушать. «Пирĕн, — тет хаçат, — пурнăç условийĕсем тата ытларах йывăрлансан та чăтасах пулать».

Малалла хаçат нимĕçсем гитлерла йĕркесемпе тата режимпа килĕшменни ытларах та ытларах ÿссе пыни çинчен йышăнать: «Халĕ, — тет хаçат, — ыйту çапла тăрать: хирĕçмелле-и, харкашмалла-и пирĕн, пĕр хамăршăн кăна шухăшламалла-и, е çак хамăр пурăнакан обществăллă строя хисеплесе, юрантамалла-и?» Хаçат шухăшĕпе, «пĕтĕм хĕнхур та çакăнтан килет: этемсем харкашма, кăмăлсăрланма пăрахас пырăнне, пушшех хирĕçме тăрăшаççĕ. Нервсене сăмахпа каласа кăна мар, вăйпа та лăплантарма пулать», — тесе хăратать гитлерла листок.

ГЕРМАНИРЕ ÇЫНСЕМ ÇИТМЕÇÇĔ

АНКАРА, апрелĕн 22-мĕш. (ТАСС) Рейтер агентствин Анкарари корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германăн рабочисем пухма янă çĕнĕ эмиссарĕ Софийăна пынă. Çакă вăл Германире çын питĕ нумай çитменнине кăтартса паракан нисенчен пĕри пулса тăрать. Нимĕçсен çарĕ çавтери пысăк çухатусем тÿсет, çавна пула промышленноçăн паха предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисене те ĕлĕк çар службинчен хăтарнăскерсене халĕ çара илеççĕ. Гитлер, ĕç вăйĕ çитменнине пула сиксе тухнă йывăрлăхсене пĕтерес тесе, рабочисене ытти çĕршывсенчен илсе пырать.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ГАВР ТАТА РЕЙН ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх апрелĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Рейн облаçĕнчи тĕрлĕ объектсем çине тата Гаврти доксем çине вĕçсе пырса тапăннă. Тăвагă самолет хăйсен базине таврăнман.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ФРАНЦИ ÇИНЕ КАЛЛЕХ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: апрелĕн 22-мĕшĕнче кăнтăрла Англи авиацийĕ Шербур районĕ çине вĕçсе пырса тапăннă. Бомбардировщиксем противникăн аэродромĕсене атакăланă. Çав операцисенче пулнă Англи самолечĕсем каялла хăйсен базине пурте таврăннă.

ИТАЛИН БАЛКАНРИ ТАТА ВАТАÇĔР ТИНĔС ÇИНЧИ ÇУХАТĂВĔСЕМ

ЖЕНЕВА, апрелĕн 22-мĕш. (ТАСС) Швейцарири «Националь цейтунг» хаçат апрелĕн 19-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: март уйăхĕнче итальянецсен Балканра 352 çын вилнĕ, 358 çын аманнă, 130 çын çухалнă; çурçĕр Африкăра — 174 çын вилнĕ, 138 çын аманнă, 16.49... çын çухалнă. Балканра итальянецсен пысăк çухатусем тÿснинчен уççăнах ĕнтĕ итальянецсем тытса илнĕ çĕршывсенче лару-тăру çивĕчленсе пыни курăнать.

АМЕРИКĂРА СЛАВЯНСЕН СЪЕЗДНЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС) Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи славянсен съездне вăйлăн хатĕрленеççĕ.

Съезд апрелĕн 25-мĕшĕнче Детройтра уçăлмалла, 26-мĕшĕнче хупăнмалла. Съезд хыççăнах пысăк митинг пулса иртмелле. Çав митинг участникĕсем Европăри славян халăхĕсене Гитлера хирĕç пĕрле çапăçма чĕнсе каланине радио тăрăх памалла.

Тыткăна илнĕ красноармеецсене гитлеровецсем тискеррĕн асаплантараççĕ

ЛОНДОН, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС). Норвегин Лондонри паллă çыннисем илнĕ хыпар тăрăх, тыткăна илнĕ красноармеецсене, Норвегие илсе пынăскерсене, гитлеровецсем тискер кайăкла асаплантараççĕ. Тыткăнри красноармеецсем е чирлесе, е выçăла, е хĕненипе вилеççĕ. Иртнĕ кĕркунне Нарвикпе Бьервика илсе пынă 300 красноармеецран хĕл каçиччен 50 çын вилнĕ. Тыткăна лекнĕ красноармеецсене пĕтĕм йĕмĕсене, шинелĕсене, атă-пушмакĕсене туртса илнĕ. Пĕр норвежец çапла каласа панă: тыткăна лекнĕ 70 красноармеец çавтери выçă пулнă, вĕсем ешĕкре шăнса пăрланса кайнă селедкăсем курнă та çав селедкăсене пĕçерсе çиме тумасăр чĕрĕллех çисе янă. Пĕринче кÿлнĕ лаша çуни мĕнешех çырмана пăр айне кайнă, тыткăна лекнĕ красноармеецсене тăрлă шыв çине кĕрсе çав лашана çăлма приказ панă. Пĕр красноармеец шывра çавтери шăннипе утма та, хускалма та пултарайман. Хуралçăсем çав красноармеец çывăхри пÿрте илсе кĕрес вырăнне 2 миля утса пынă. Красноармеец вилнĕ.

Сетермоенри лагерьте те условисем çавăн пекех. Кунта декабрь уйăхĕнче 36 красноармееца персе вĕлернĕ.

Нимĕçсем красноармеецсене тумтир, ĕçме-çиме тавраш̆е паракан норвежецсене калама çук хытă айăплаççĕ. Пур çĕрте те красноармеецсене пулăшу пама юрамасть тесе плакатсем çыпăçтарса тухнă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ АСАПЛАНТАРСА ВĔЛЕРНĔ ПЬЕР СЕМАРĂН ВИЛЕС УМĔН ÇЫРНĂ ÇЫРĂВĔ

ЖЕНЕВА, апрелĕн 21-мĕш. (ТАСС). Францин гитлеровецсем асаплантарса вĕлернĕ паллă деятелĕ, Францири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн членĕ Пьер Семар хăйĕн юлашки çырăвĕнче, персе пăрахиччен парса ĕлкĕрнĕскерĕнче, çапла çырать:

«Хаклă тăвансем! Кĕтмен çĕртен килсе тухнă майпа усă курса эпĕ сире хамăн юлашки çырăвăма паратăп, мĕншĕн тесессĕн мана тепĕр темиçе самантран персе вĕлереççĕ. Эпĕ вилĕме пĕр хумханмасăр кĕтетĕп, коммунистсем патриотсем пек, революционерсем пек вилме пĕлнине эпĕ çынвĕлерекенсене кăтартăп. Манăн юлашки шухăшăмсем сирĕнпе, çапăçури юлташсем, пирĕн еслă партин мĕнпур членĕсемпе пĕрле, мĕнпур француз патриочĕсемпе пĕрле, Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсемпе пĕрле, унăн çулпуçĕпе еслă Сталинпа пĕрле. Эпĕ вĕсем фашистсене çĕнтерессине ĕненсе тата Франция ирĕке тухассине ĕненсе вилетĕп. Манăн железнодорожник юлташăмсене калăр: эпĕ вĕсене гитлеровецсемшĕн пĕр ĕç те ан тăвăр тесе халаласа хăваратăп. Вĕсем мана ăнланĕç, вĕсем мана илтĕç, вĕсем кĕрешĕç, эпĕ çакна шанатăп. Сывă пулăр, хаклă тăвансем! Ĕмĕрлĕхе уйăрăлса каяс самант çывхарса килет. Анчах эпĕ çакна пĕлетĕп: мана халь персе пăрахакан гитлеровецсене çĕнтересĕ ĕнтĕ, Франция еслă кĕрешĕве малалла туса пыма каллех май илĕ.

Сывă пулччăр ССР Союзĕпе унăн союзникĕсем! Сывă пултăр Франция!»

ПАРИЖРА ПАРУ-ТĂРУ ÇИВĔЧЛЕНСЕ КАЙНĂ

ЖЕНЕВА, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС). Парижра хула комендантĕн приказне пичетленĕ. Çав приказра «оккупациллĕ çарсен салтакĕсемпе офицерĕсем çине нумай хут тапăнни» çинчен каланă. Çав тапăнусене пула француз-заложниксен пĕр ушкăнне персе вĕлернĕ. Парижăн гитлерла комендантĕ тапăнакансене çакăр кун хушшинче тупса памасан, заложниксен тепĕр ушкăнне персе пăрахассипе хăратать. Кунсăр пуçне тата çĕршер француза каторгăллă ĕçе яратпăр, тенĕ приказра. Оккупациллĕ влаçсем çавăнпа пĕрлех тата апрелĕн 24-мĕшчен Парижри тата Париж çумĕнчи пунктсенчи мĕнпур театрсене, кинотеатрсене тата ресторансенчи эстрадăсене хупни çинчен пĕлтернĕ. Хулара пурăнакан çынсене каçхине урама тухма чарнă.

ЗАЛОЖНИКСЕНЕ ВĔЛЕРНĔ ПИРКИ ФРАНЦИ ХАЛĂХĔ ТĂРĂХНИ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС) Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Сен-Назерти заложниксене асаплантарса вĕлернĕ пирки Франци рабочийĕсен массисем хушшинче тарăхса хумханни палăрать. Рабочисене йĕрăманах çакă питех те тарăхтарать: гитлеровецсем Сен-Назерти заложниксенчен асаплантарса вĕлерме уйăрса илнĕ çынсенчен пĕри — металлистсен профсоюзĕн генеральнăй секретарĕ Бланша пулнă.

РЕНО ТАТА МАТФОР ЗАВОЧĔСЕНЕ ПЫСĂК СИЕН КÿНĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: тĕрĕс сведенисем тăрăх, Англи авиацийĕ Рено завочĕсем çине бомбăсем пăрахни питех те ăнăçлă пулнă. Заводсен виççĕмĕш пайне пачах çĕмĕрсе тăкнă, тепĕр виççĕмĕш пайне юсиччен чылай вăхăт иртмелле, юлашки виççĕмĕш пайне 2 уйăхпа 4 уйăх хушшинчи вăхăтра кăна юсаса çитерме пулать. Çĕмĕрнĕ цехсенче Германи суднисем валли тата авиаци валли пинĕ-пинĕпе моторсем пуса кăларма хатĕрленнĕ пулнă, моторсен хăвачĕ 200—400 лаша вăйĕ чухлĕ пулмалла пулнă.

Пуассири Матфор завочĕсем çине бомбăсем пăрахни те питех те ăнăçлă пулнă. Технически цехсемпе запас чаçĕсен цехне çуррине ишĕлтерсе антарнă. Монтаж цехĕпе пулăшу цехĕ пĕтĕмĕшпех пĕтсе ларнă.

КВИСЛИНГОВЕЦСЕМ НОРВЕЖЕЦСЕНЧЕН МĂШКĂЛЛАНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, квислинговецсен çĕнĕ распоряженине пичетлесе кăларнă. Çав распоряжени норвежецсене хăйсен мĕнпур çырăвĕсене гитлерла салампа пĕтерме тата магазинсемпе учрежденисенче гитлерла салют пама хушать. Халăх квислинговецсен çав приказне пурнăçа кĕртмест.

НОРВЕГИ ПАРТИЗАНĔСЕН ХĂЮЛЛА ĔÇĔСЕМ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС). Норвегирен нумаях пулмасть килнĕ çынсем çапла каласа параççĕ: çурçĕрте нимĕç войскисен тылĕнче кĕрешекен норвежецсен партизанĕсене Норвегин пĕтĕм халăхĕ пулăшса тăрать. Норвежецсен партизанĕсен 23 çынран тăракан отрячĕ юлашки вăхăтра нимĕçсен çурçĕр Норвегипе Финлянди хушшинчи çыхăнăвне темиçе хутчен те татнă. Нимĕçсенчен тытса илнĕ хĕçпăшалсемпе хĕçпăшалланнă партизансем нимĕçсен автоколоннисем çине тапăнаççĕ. Иртнĕ виçĕ уйăх хушшинче партизансем нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ. Нимĕçсен автоколоннисем çине пурпĕнчен ытларах Киркинесран кăнтăртарахри районра тапăнаççĕ. Партизансем активлăн кĕрешнине пула нимĕçсен халь хăйсен автоколоннисене вăйлă хурал парса ăсатма тивет. Партизансен отрячĕ Карасьок юханшывĕ çинчи кĕпере сирпĕнтерсе янă, ăна нимĕçсен Финляндие каякан артиллерине каçарнă чухне сирпĕнтерсе янă.

НОРВЕГИЕ ВЫÇЛĂХ ХĂРАТСА ТĂРАТЬ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 23-мĕш. (ТАСС). Швецире тухакан «Свенска моргенбладет» хаçат: Норвегие выçлăх пуласси хăратса тăрать, тесе çырать. Квислинговецсем 30.000 норвежеца ялхуçалăх ĕçĕсене ĕçлеме яла ярасшăн. Нимĕçсемпе квислинговецсем çавна май промышленноçăн темиçе предприятине хупасшăн тата кам яла ĕçлеме каймасть, çавсене продовольстви карточкисем памалла мар тăваççĕ.

ГРЕЦИ ХАЛĂХĔ МАССĂЛЛĂН ВИЛСЕ ПĔТСЕ ПЫРАТЬ

СОФИЯ, апрелĕн 22-мĕш. (ТАСС). Болгарин хаçачĕ «Мир» çапла йышăнать: нимĕçсемпе итальянецсем оккупациленĕ Грецире выçлăхпа тата тĕрлĕ асапсене пула халăх массăллăн вилсе пĕтсе пырать. «Грецири врачсен союзĕ халăха пама пултаракан пĕртен пĕр пулăшу вăл, — тесе çырать хаçат, — вилесене çунтарассине организацилени пулса тăрать. Хальхи условисенче вилессене шăтăк чавса хуни вăл чир сарăс тĕлĕшрен хăрушă, кунсăр пуçне тата тупăксем тума та хăмасем çук».

—o—

Совет Союзĕ тăрăх

ПЕРЕКЕТ КАССИСЕНЕ УКÇА ХЫВАССИ ÿССЕХ ПЫРАТЬ

Перекет кассисене укçа хуни палăрмаллах ÿссе пырать. 1941 çулти иккĕмĕш çурçулта Совет Союзĕнчи ĕççыннисем перекет кассисене 244 миллион тенкĕ укçа хывнă пулсан, 1942 çулта малтанхи виçĕ уйăхрах 297 миллион тенкĕ хунă.

Перекет кассисене укçа хуракансен пучĕ те, хывакан укçан хисепĕ те ÿссе пыни пур республикăсенче те, крайсенче те, облаçсенче те палăрать. Мускаври ĕççыннисем 1942 çулта малтанхи 3 уйăхра перекет кассисене 1941 çулти иккĕмĕш çурçултинчен 5 хут ытларах укçа хывнă.

(ТАСС).

КОЛХОЗСЕН УЙХИРĔСЕНЧЕ КОНЦЕРТСЕМ ПУЛСА ИРТЕÇÇĔ

Колхозниксене çураки вăхăтĕнче уйхирте ĕçлеме савăнăçлăрах пултăр тесе, Ворошиловград облаçĕнчи колхозсене концертсем лартса пама виçĕ бригада тухса кайнă. Çав бригадăсене облаçри искусство управленийĕпе пĕрле Филармони тата халăх пултарулăхĕн çуртĕ организациленĕ.

Облаçри кинофикаци управленийĕ колхозсене кусса çÿрекен 18 киноустановка ярать.

Кашни сеанс умĕн агитаторсен, вырăнти учительсен, агрономсен выступленийĕсем пулаççĕ. Вĕсем колхозниксене тăван çĕршывра тата ютçĕршывсенче пулса иртнĕ паллă ĕçсем çинчен каласа кăтартаççĕ. (ТАСС).

И. ДЗЕРЖИНСКИН ÇĔНĔ ОПЕРИ

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен Комитетĕнче И. Дзержинский композитор çырнă 4 актлă çĕнĕ оперăна итлесе тухнă. Опера ячĕ «Гроза». Автор пухăннă çынсем умĕнче çав музыкăллă пысăк произведение хăех выляса панă. Ăна вăл А. Н. Островскин «Гроза» ятлă паллă драмми тăрăх çырнă.

И. Дзержинскин çĕнĕ ĕçне пухăннă çынсем пысăк интереспа итленĕ. Выляса пĕтерсен, итлекенсем ăна сÿтсе-явса пурте ырланă. (ТАСС).

Америка самолечĕ Приморски край территорийĕ çине ирĕксĕр анса ларни

ХАБАРОВСК, апрелĕн 22-мĕш. (ТАСС). Апрелĕн 18-мĕшĕнче Приморски край территорийĕ çине Америкăн çар самолечĕ анса ларнă. Самолет экипажĕ каланă тăрăх, самолет çав кун Америка авиацийĕ Япони утравĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă çĕре хутшăннă, анчах та вăл ориентировка çухатнине пула унăн совет çĕршывĕн территорийĕ çине ирĕксĕрех анса ларма тивнĕ.

Пĕтĕм тĕнчери халăхсем хушшинче пурте йышăннă правилăсем тăрăх, совет влаçĕсем Америка самолечĕпе унăн экипажне тытса чарнă.

—o—

Хаçатра тухнă материалсем тăрăх

„Ялхуçалăх кадрĕсене тимлĕн хатĕрлемелле“

1942 çулти мартăн 1-мĕшĕнче пирĕн хаçатра «Ялхуçалăх кадрĕсене тимлĕн хатĕрлемелле» ятлă материал пичетлесе тухнăччĕ. Материалра Вăрнар районĕнче ялхуçалăх кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине кăтартса панă.

Асăннă материал пирки ВКП(б) Вăрнар райкомĕ редакцине çапла пĕлтерчĕ: «Заметкăра çутатса панă фактсем тĕрĕс. Пирĕн районра ялхуçалăх кадрĕсене хатĕрлес ĕç çителĕксĕр пулса пынă. Апрель уйăхĕ пуçланнă тĕле илес пулсан, ку енĕпе çакна кăтартса пама пулать. 7 кунлă курс урлă колхоз председателĕсем пулма 37 çын вĕрентсе кăларма палăртнă, анчах 32 çын çеç хатĕрленĕ, махорка ÿстерес енĕпе ĕçлекен звеньевойсене 40 çын вĕрентес вырăнне 25 çын кăна вĕрентсе кăларнă, кок-сагыз культурипе ĕçлекен звеньевойсене 15 çын хатĕрлеме палăртнă, 17 хатĕрленĕ, колхоз агротехникĕсене 30 çын вĕрентсе кăларас вырăнне 14 çын кăна вĕрентсе кăларнă.

Пур агрономсемпе зоотехниксене те колхозсене кулленхи ĕçре пулăшса пыма, уйрăмах агротехкружоксене организацилесе ертсе пыма колхозсем çумне çирĕплетнĕ.

Вăтам тата туллимар вăтам шкулсенче вĕренекенсене ялхуçалăхĕнче ĕçлеме вĕрентесси енĕпе çакна палăртмалла: районри 5 вăтам тата 13 туллимар вăтам шкулсенче трактор енĕпе 247 çын, автомобиль енĕпе 80 çын вĕренеççĕ. Практикăллă занятисене иртерме шкулсем çумне трактор бригадисен опытлă бригадирĕсене, механикĕсене тата агрономсене çирĕплетнĕ.

ВКП(б) райкомĕ ялхуçалăх кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе плана пĕтĕмĕшпех тата вăхăтра пурнăçлама кирлĕ мерăсем йышăнчĕ».

Атăл пăрĕ тапранчĕ

Ĕнер, апрелĕн 24-мĕшĕнче, Шупашкар тĕлĕнче Атăл пăрĕ тапранса юхма тытăнчĕ.

Атăл шывĕ талăк хушшинче 65 сантиметр хушăннă.

—o—

Пĕлтерÿ

Апрелĕн 26-мĕшĕнче каçхине 8 сехетре Хĕрлĕ Çар Çуртĕнче агитаторсемпе беседчиксем валли доклад пулать. Докладăн теми:

«Майăн 1-мĕшĕ — фашистла захватчиксене хирĕç кĕрешмелли тата вĕсене çĕмĕрсе тăкма ирĕклĕхе юрататакан халăхсен вăйне мобилизацилемелли кун».

* * *

Майăн 1-мĕшĕнче доклад тăвакансем валли ирттерекен инструкциллĕ доклада апрелĕн 24-мĕшĕнчен 25-мĕшне куçарнă.

Доклад Хĕрлĕ Çар Çуртĕнче 8 сехет те 30 минутăра каçхине пулать.

ВКП(б) Горкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧУВАШСКИЙ
СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ
об'являет на 1942-43 учебный год
ПРИЕМ СТУДЕНТОВ
на 1-ый курс агрономического и зоотехнического факультетов.
В Институт принимаются лица, имеющие среднее образование.
ДИРЕКЦИЯ.

Чувашскому тресту
МАСЛОПРОМА
ТРЕБУЮТСЯ
опытные бухгалтера-ревизоры и старшие бухгалтера маслозаводов.
Оплата по соглашению.
Обращаться в трест по адресу: гор. Чебоксары, улица 2-я Герцена, дом № 32, к главному бухгалтеру.

УПОЛНАРКОМЗАГУ СССР
ПО ЧУВАШСКОЙ АССР
ТРЕБУЕТСЯ
бухгалтер-ревизор.
Зарплата по госнормированию. Предоставляется квартира. Иногородним оплачиваются расходы за проезд.
Обращаться: гор. Чебоксары, Набережная реки Волги, дом № 13, телефон 5—26 два звонка, главному бухгалтеру.

Для украшения Первомайских колонн Красных уголков и зданий
в магазинах КОГИЗА имеются в продаже:
Государственные гербы, цитаты на стекле и портреты вождей на полотне.
Обращаться во все магазины КОГИЗА.
Чувашское отделение КОГИЗА.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 454

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 п: м